25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ОКТЯБРЬ
14
ЮНКУН
240 (6175) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Октябрь уявне фронта вăйлăнрах пулăшнипе кĕтсе илер

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 25 çул тултарнине совет халăхĕ вăрçă условийĕсенче кĕтсе илет. Пирĕн юратнă тăван çĕршыва сĕмсĕррĕн тапăнса кĕнĕ нимĕç оккупанчĕсене хирĕç хаяррăн кĕрешсе, совет халăхĕ аслă Октябрь панă ирĕклĕхпе чыслăха, хăйĕн гражданла прависемпе тивĕçлĕхĕсене, хăйĕн çак иртнĕ çирĕмпилĕк çул хушшинче тунă историллĕ чаплă çĕнтерĕвĕсене хÿтĕлет. Отечественнăй вăрçă хирĕсенчи çапăçура пĕтĕм совет халăхĕн кунçулĕ пирки ĕç татăлать. Хĕрлĕ Çарăн геройла воинĕсем тăван çĕршыва сыхласа хăварассишĕн урнă тăшмана хирĕç хăйсен пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр, юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçаççĕ.

Совет Союзĕнчи мĕнпур тăванла халăхсен представителĕсем пекех, пирĕн чăваш халăхĕн ывăлĕсем те çак аслă кĕрешÿре халиччен нихăçан пулман геройлăхпа паттăрлăх кăтартаççĕ; вĕсем орденлă республикăн чысне хÿтĕлеççĕ. Октябрьти революципе Совет влаçĕ пăхса çитĕнтернĕ çулăмлă патриотсем хăйсен çапăçури ĕçĕсемпе пĕтĕм çĕршыв умĕнче чапа тухаççĕ.

Пирĕн республикăри ĕççыннисем хăйсен фронтри ывăлĕсене тивĕçлĕ пулма тăрăшаççĕ. Вĕсем фабрикăсемпе заводсенче çĕнтерÿ хĕçпăшалне туптаççĕ, фронтри паттăр воинсене вăй-хăватпа сывлăх паракан апат-çимĕçсем хатĕрлеççĕ. Фронтпа тыл хушшинчи, халăхпа çар хушшинчи тăванла çыхăну кунран-кун ÿссе, çирĕпленсе пырать. Çакна ăна халĕ республикăри ĕççыннисем Октябрь уявĕ ячĕпе фронтри боецсем валли пуян парнесем хатĕрленинчен те, хĕл çывхарса килнĕ май вĕсем валли ăшă тумтирсем пухнинчен те, фронтри боецсемпе республикăри ĕççыннисем пĕр-пĕрин патне тăтăшах çырусем çырса тăнинчен те тата ытти [illegible] курма пулать.

Пирĕн хаçатăн паянхи номерĕнче Н-ски чăçĕн политотдел начальникĕ, пирĕн земляк В. Мистрюков юлташ çапла çырать:

«Эпир, земляксем-фронтовиксем, тăван республикăри предприятисемпе колхозсем мĕнле ĕçлесе пынине куллен сăнаса тăратпăр. Çав çитĕнÿсенчен кашни пире савăнтарать тата тăшмана пуçĕпех çапса аркатма хавхалантарать. Боец, хăйĕн тылĕ çирĕп пулнине тата лайăх ĕçленине пĕлсе тăрса, çапăçăва хăюллăн кĕрет, гитлерла вăрă-хурахсене хастаррăн пĕтере-пĕтере тăкать».

[illegible]

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура республикăри пур предприятисем те хутшăнчĕç. Чылай предприятисем сентябрьти плана ирттерсе тултарчĕç, виççĕмĕш кварталла ăнăçлăн вĕçлерĕç. [illegible] Шупашкарти пир-авăр фабрики, [illegible] фабрика, ликерла эрех заводĕ, табак фабрики, Пĕререс леспромхозĕ тата ытти фабрикăсем промышленноçпа промысла кооперацийĕн ытти нумай предприятийĕсем çĕршыв планне ирттерсе тултарчĕç. [illegible] пиншер тенкĕлĕх продукци пачĕç.

Пĕререс леспромхозĕ, сăмахран, виççĕмĕш кварталта вăрман хатĕрлевĕн плана 183 процент, турттарас енĕпе 265 процент тултарчĕ. Çапла вăл оборона питех те кирлĕ пулса тăракан вăрман материалĕсене çĕршыва кĕтнинчен ытла парать.

Вăрçă вăхăтĕнче промысла артелĕсем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем çĕнĕ йышши продукцисем кăларма пуçларĕç. Плансене йĕркеллĕн тултараççĕ. Çапла, Октябрьски районри [illegible] «Труд» промартель [illegible] плана 257 процент тултарнă, çакăнпа пĕрлех çулталăкри плана та 133 процент пурнăçа кĕртнĕ. Сентябрь уйăхĕнче августринчен 18 процент ытларах продукци туса кăларнă.

Пирĕн колхозсем те вăрçă вăхăтĕнчи тырпула пухса кĕртес тĕлĕшпе кăçал чылай паха çитĕнÿсем турĕç. Малта пыракан колхозсем тырпулсене çапса тирпейлесе, государство умĕнчи парăмсене татрĕç.

Анчах та эпир тунă çитĕнÿсемпе пĕр самантлăха та лăпланса ларма пултараймастпăр. Тăван çĕршыв умĕнче тăракан хăрушлăх халĕ пысăк-ха. Юн ĕçсе урса кайнă тăшман малаллах хирĕнсе кĕме хапсăнать. Ирсĕр тăшмана чарса лартса çапса аркатас тесен, çĕршыв умĕнчи пысăк хăрушлăха сирсе ярас тесен, пирĕн татах та ытларах вăй хурса ĕçлемелле.

Фабрикăсемпе заводсенчи, колхозсемпе совхозсенчи Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва татах та ытларах вăйлатмалла, халиччен илнĕ обязательствăсене тултарнă пулсан, çĕнĕ обязательствăсем илсе вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешмелле.

Октябрь уявĕ ячĕпе çĕршыв валли тивĕçлĕ парне хатĕрлес тесен, аслă уява продукци туса кăлармалли производствăллă плансене ирттерсе тултарнипе, ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçленипе кĕтсе илмелле.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă ятпа государствăна тырă леçмелли хĕрлĕ обозсем организацилеме йышăннине чылай колхозсем пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç. Çĕмĕрле районĕнчи «Лесной огонек», Ворошилов ячĕпе тăракан, «1-ое Мая», «Большевик», «Комбайн» колхозсем, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Новинскри Сталин ячĕпе тăракан колхоз Октябрь [illegible]

Анчах çак пысăк ĕçре те партипе комсомол вырăнти организацийĕсем [illegible] кирлĕ пек организацилемен.

ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсем, парти мĕнпур пуçламăш организацийĕсем халĕ рабочисемпе служащисен, колхозниксемпе колхозницăсен хушшинчи массăллă-политикăллă, массăллă-агитаци ĕçне [illegible]

Партиллĕ-политикăллă тата агитациллĕ ĕçе анлăн туса пырса, парти организацийĕсем, профсоюзсен, комсомол организацийĕсем [illegible] Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă кунне фронта паракан пулăшăва вăйлатса кĕтсе илер!

Парнесем ытларах ярса пама тăрăшаççĕ

ПĔРЕС, октябрĕн 13-мĕшĕ. Фронтри боецсем патне парнесем ярса парас ĕç районра вăйлăн сарăлнă. Октябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне районри ĕççыннисем пĕтĕмпе 330 килограмм какай, 57 килограмм çу, 53 килограмм пыл, 83 килограмм сахăр, 1428 çăмарта, 60 хур тата кăвакал, 1.700 килограмм шур çăкăр, 1.500 килограмм [illegible], 620 килограмм купăста, 150 килограмм кишĕр, 70 килограмм сухан, 85 килограмм [illegible], [illegible] хăяр, 60 килограмм [illegible] помидор, 6.469 тенкĕ укçа пуçтарнă.

Д. МИХАЙЛОВ.

* * *

ЧКАЛОВСКОЕ, октябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем чăваш дивизийĕн Н-ски чăçĕн боецĕсемпе командирĕсем патне уяв парнисем ярас(?) [illegible] Октябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне [illegible] 20 килограмм [illegible] 100 килограмм, çăмарта 2.200 штука, чăхсем 143 пус, хурсем 54 пус, [illegible] 155 центнер, 10 пин тенкĕлĕх эрех, 4 пин тенкĕлĕх премĕк т. ыт. те. Районра уяв парнисем ярас ĕç сарăлнăçемĕн сарăлса пырать.

Д. КИРПИЧОВ.

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). [illegible] уяв парнисем ярса парас ĕç Çĕмĕрле районĕнче те вăйлăн сарăлнă.

Ку таранччен районри колхозсем те [illegible] боецсем патне уяв парнисем яма 268 килограмм какай, 50 килограмм çу, 33 килограмм пыл, 1.250 çăмарта, 1.500 килограмм шур çăкăр, 1.800 килограмм çĕрулми, 560 килограмм купăста, колбаса тума 160 килограмм какай т. ыт. [illegible] Кусемсĕр пуçне, [illegible] 11 пин тенкĕ [illegible]

К. ЛИСИН.

Хаклă фронтовиксем, тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр аркатса пырăр!

Кăçалхи август уйăхĕнче Н-ски чаçри боецсемпе командирсем тата политработниксем, Хĕрлĕ Çара Чăваш республикинчен кайнăскерсем митинга пухăнса, унта Чăваш республикинчи ĕççыннисем патне çыру яма йышăннă. Çав çырура, «Чăваш Коммуни» хаçатăн номерĕсенчен пĕринче пичетленсе тухнăскерĕнче, пирĕн земляксем хăйсем çине ответлă обязательствăсем илнĕччĕ. Вĕсем воинăн мастерлăхне алла илессишĕн, ирсĕр фашистсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пырассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме сăмах панăччĕ.

Çав обязательствăсене йышăннăранпа икĕ уйăха яхăн вăхăт иртрĕ. Çак кунсенче ВКП(б) Обкомĕн тата республикăри хаçатсен редакцийĕсен адресĕпе Н-ски чаçăн политоделĕн начальникĕ, пирĕн земляк Мистрюков юлташ çыру ячĕ. Çав çырура вăл Н-ски чаçăн çитĕнĕвĕсем çинчен каласа парать.

Аяларахра эпир çав çырăва тата фронтовиксене панă ответа пичетлетпĕр.

Хамăрăн сăмаха эпир çирĕппĕн тытатпăр

Эпир, земляксем—фронтовиксем, тăван республикăри предприятисемпе колхозсем мĕнле ĕçлесе пынине куллен сăнаса тăратпăр. Çав çитĕнÿсенчен кашни пире савăнтарать тата тăшмана пуçĕпех çапса аркатма хавхалантарать. Боец, хăйĕн тылĕ çирĕп пулнине тата лайăх ĕçленине пĕлсе тăрса, çапăçăва хăюллăн кĕрет, гитлерла вăрă-хурахсене хастаррăн пĕтере-пĕтере тăкать.

Августăн варринче чăваш боецĕсемпе командирĕсем тата политработникĕсем хăйсен землякĕсем патне—Чăваш республикинчи ĕççыннисем патне çыру çырса ячĕç. Çав çырура панă сăмаха пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе мĕн туни çинчен кĕскен çырса пĕлтеретĕп.

Çак вăхăт хушшинче пирĕн юлташсем пулас çапăçусене тĕплĕн хатĕрленчĕç, хăйсен вăрçă ĕçĕнчи пĕлĕвĕсене çине тăрса çĕнетсе, ÿстерсе пычĕç. Боевой вĕренÿре земляксем хăйсем республика умĕнче панă обязательствăсем çинчен пĕр самантлăха та манман. Кашни хăйĕн юлташĕнчен вĕренÿре, хăйĕн тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртнĕ çĕрте çирĕп те дисциплинăллă пулма ыйтнă. Çапăçури туслăх палăрмаллах çирĕпленчĕ. Вĕренÿре кая юлса пыракансене хĕрÿллĕн пулăшса пычĕç. Чаçсемпе подразделенисенчи интернационаллă туслăха çирĕплетес ĕçре чăваш боецĕсем примерпулса тăчĕç: вĕсем хăйсен çитĕнĕвĕсемпе çĕнтерĕвĕсене хăйсен çывăх тусĕсемпе — казахсемпе, узбексемпе, тутарсемпе, кара-калпаксемпе валеçеççĕ, вĕсем пĕр-пĕрне пулăшаççĕ, пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ.

Нумаях пулмасть пирĕн чаçсемпе подразделенисенче земляксен черетлĕ пухăвĕсем пулса иртрĕç. Вĕсенче асăннă çырура илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртнин малтанхи итогĕсене сÿтсе-яврĕç. Командованин аллинчи даннăйсем тăрăх тата боецсем пĕр-пĕрне тĕрĕслесе тухни тăрăх, çыру çине алă пуснă боецсем боевой подготовкăри отличниксем пулса тăраççĕ, çакă вăл 93 процент пулать. Службăра хăйсене хăйсем лайăх тыткаланăшăн, тактикăна тата хăйсен хĕçпăшалне отлично пĕлнĕшĕн чăваш боецĕсенчен çурине ытла командирсем вiçшер ытларах та тав тунă. Кĕрешÿре пĕлÿлĕхпе пуçарулăх кăтартнăшăн пирĕн земляксенчен 50 боеца ытла отделенисемпе взводсен командирĕсем пулма уйăрса çирĕплетнĕ, вĕсем хăйсен ĕçне ăнăçлăн туса пыраççĕ. Нумай юлташсем хăйсем питех те чаплă пулеметчиксем, артиллеристсем, минометчиксем, автоматчиксем пулнине кăтартса пачĕç.

Земляксем çакна шантарса калаççĕ: вĕсем Командованин кирек мĕнле заданине те пурнăçа кĕртме хатĕр, республика умĕнче панă сăмаха вĕсем çирĕп тытаççĕ, çав сăмаха çапăçу хирĕнче пурнăçа кĕртсе тÿрре кăлараççĕ.

Республикăри заводсемпе колхозсем мĕнле ĕçлени çинчен, республикăри рабочисемпе колхозниксем тата служащисем фронта мĕнле пулăшни çинчен пирĕн пата тăтăшах çырса тăрăр.

Коммунистла салампа —

Н-ски чаçăн политотдел начальникĕ **В. МИСТРЮКОВ.**

Мĕнпур вăя—фронта пулăшнă çĕре

Чăваш республикинчи ĕççыннисем Н-ски чаçри земляк—фронтовиксем янă çырăва питех те интересленсе вуласа тухрĕç. Хăйĕн фронтри ывăлĕсен геройла ĕçĕсемпе хавхаланса, чăваш халăхĕ тылра пĕтĕм вăя хурса ĕçлет, Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшса тăрать.

Пирĕн республикăри хăшпĕр фабрикăсемпе заводсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура паха çитĕнÿсем туса пычĕç, вĕсен ĕçĕсене ВЦСПС-па тивĕçлĕ наркоматсем палăртрĕç. Аван ĕçлерĕç кăçал колхозниксем. Вĕсем вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек пуян тырпул пухса илчĕç. Республика тырпулсене вăхăтра вырса пуçтарчĕ, халĕ кĕлтесене турттарса капана хывса пĕтернĕ, вассасах авăн çапать, государствăна тырă парать. Колхозсем çĕрулми кăларса пĕтереççĕ. Обществăллă выльăх-чĕрлĕхе малалла аталантарас ĕçре нумай колхозсем çĕнĕ çитĕнÿсем турĕç. Комсомольски, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Чкаловски, Çĕмĕрле районĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçа кĕртнĕ те ĕнтĕ.

Чăваш республикинчи колхозниксем сире, фронтовиксене, тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç, ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене кăçал татах та ытларах парĕç.

Çакăнпа пĕрлех республикăри ĕççыннисем, хăйсен ĕç укçийĕсенчен перекетлесе хăварса, тăшмансемшĕн аçа-çиçĕм пулса тăракан хаяр машинăсем тунă çĕре укça-тенкĕсем параççĕ. Çав укçа-тенкĕпе ĕнтĕ 2 бронепоезд, самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине, «Пионер Чувашии» ятлă танк тунă. Хальхи вăхăтра малта пыракан трактористкăсем танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тума укçа-тенкĕ пухаççĕ.

Республика тăван çĕршыва паттăррăн хÿтĕлекенсем валли хĕллехи тумтирсемпе урана тăхăнмаллисем ярса парать. Халĕ пиншер тир, кĕрĕк-пиншаксем, çăматăсем, çĕлĕксем тата ытти тĕрлĕ ăшă япаласем нумай пухнă. Октябрь уявĕн кунĕсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем Чăваш республикинчи ĕççыннисенчен 15 вагон ытла уяв парнисем илеççĕ. Вĕсене ятарласа пухса хатĕрленĕ, фронта вăл парнесене уйрăм эшелонпа ăсатаççĕ.

Хаклă фронтовиксем, республикăри ĕççыннисем сирĕн çине шанаççĕ. Отечественнăй аслă вăрçăн çапăçу хирĕсенче геройла çапăçса пирĕн земляксенчен тăвата çын—М. Ефимов, Ф. Орлов, Б. Васильев, Г. Габайдулин юлташсем Совет Союзĕн Геройĕсем пулчĕç, 200 çын ытла Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илчĕç. Çакă вăл чăваш халăхĕн ывăлĕсене татах та ытларах хавхалантарать.

Хаклă фронтовиксем, фашистла тискер кайăксене пĕр хĕрхенмесĕр çапа-çапа аркатăр! Ирсĕр фрицсене пуçĕпех пĕтере-пĕтере тăкăр!

Орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем хамăрăн тăван çĕр çинчен фашистла ирсĕрсене нимĕн юлмиччен шăлса ыватма сире пĕтĕм вăя хурса пур енĕпе те пулăшĕç.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Октябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă. Ытти участоксенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Октябрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 4 танкне тата грузсем тиенĕ 10 лавне пĕтерсе тăкнă, артиллерин 6 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникăн атакисене сире-сире янă. Н-ски гвардейски чаçăн боецĕсем хÿтĕлесе тăракан участокра противник пĕр полка çити пехота вăйĕпе, 50 танк пулăшса пынипе, пирĕн позицисене виçĕ хутчен атакăланă. Гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă. Пĕр кварталта кăна пирĕн подразделенисен кăштах каялла чакмалла пулнă. Çав çапăçура 20 танк персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата нимĕçсен пехотине икĕ батальона çити вĕлерсе тăкнă. Ытти участоксенче пирĕн подразделенисем противникăн пĕчĕк ушкăнĕсен атакисене сире-сире янă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем йышăнса илнĕ рубежсем çинче çирĕпленсе тăнă тата разведкăсем тунă. Солодовников юлташ командир пулса тăракан чаçăн боецĕсем противник вырăнаçса тăракан вырăна кĕрсе кайнă та гитлеровецсене çур ротăна çити вĕлерсе тăкнă тата нимĕçсен темиçе дзотне ишĕлтерсе антарнă. Тактика тĕлĕшĕнчен хаклă пулса тăракан пĕр высотăшăн 3 кун хушши пынă çапăçусенче пирĕн боецсем тăшманăн 13 атакине сирсе янă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 800 çынна çити вĕлерсе тăкнă. Скоробогатов юлташ командир пулса тăракан подразделенин зенитчикĕсем кунхаçа нимĕçсен 3 бомбардировщикне персе ÿкернĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн войскăсем активлăн çапăçса уйрăм участоксенче малалла кайнă. Пирĕн боецсем нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ, пĕр тягач тата 60 автомашина пĕтерсе тăкнă. Кунхаçа гитлеровецсен 600 салтакпа офицера çити вилнĕ е аманнă. Ефрейтор-гвардеец Бутылкин юлташ 4 кун хушшинче противотанковăй пăшалпа персе тăшманăн 12 танкне çĕмĕрнĕ. Кĕçĕн лейтенант Пантелеев противотанковăй пăшалпа персе противникăн 2 бронемашинине тата пĕр танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем противник çине ăнăçлăн контратака тунă та 200 гитлеровеца çити вĕлерсе тăкнă. 8 станковăй пулемет, 2 миномет, 16 автомат, винтовкăсем, гранатăсем тата патронсем тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противникăн пехоти пирĕн тĕреклетнĕ пункта икĕ енчен пырса атакăланă. Гитлеровецсен атакисене сирсе янă. Пирĕн подразделенисем 4 оруди, 5 пулемет пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Минск облаçĕнче кĕрешекен отрядăн партизанĕсем октябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче противникăн войскăсем турттарса пыракан 2 поездне ÿпĕнтерсе янă. Вагонсем айĕнче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем нумай пĕтнĕ. Партизансен тепĕр ушкăнĕ фронта автомашинăсем турттарса пыракан поезда ÿпĕнтерсе янă. Çавăн чухне 56 автомашина çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Румынсен 2-мĕш горно-стрелковăй дивизийĕнчи 7-мĕш батальонăн 3-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Штефан Арделяну çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи фронтра ĕнтĕ иккĕмĕш хут çапăçать. Пĕлтĕрхи кĕркуннехи çапăçусенче дивизие çĕмĕрсе тăкса юнсăрлатса хăварнăччĕ. Ун чухне 3-мĕш ротăра 140 çынна вĕлернĕччĕ е амантнăччĕ. Ытти подразделенисем унтан та йывăртарах сухатусем тÿснĕччĕ. Унтан дивизие çĕнĕрен йĕркелесе яма Румынине илсе кайрĕç. Унта эпир çу каçиччен тăтăмăр. Халĕ фронта килес умĕн пирĕн дивизири салтаксен пĕр ушкăнĕ тарчĕç. Фронта килнĕ чухне çул çинче 3-мĕш ротăран сержант Биде, салтак Троян Тынку, вĕсемсĕр пуçне тата 2 çын тарчĕç. Пире килсе çитнĕ-çитменех, çул çинчен тÿрех çапăçăва кĕртсе ячĕç. Малтанхи 3 кун хушшинче пирĕн ротăра 60 çын вилчĕ е аманчĕ. Килте мана фронта ăсатса янă чухне манăн пĕлĕшсем мана май пулсанах тыткăна парăнма канаш панăччĕ. Йывăр минутăсем çитсе тухсан, эпĕ ха мăн туссем панă канаша асă илтĕм. Эпĕ Гитлершăн хам пуça çухатма шутламарăм».

* * *

Орел облаçĕнчи Новая Погась ялĕнчи халăха нимĕçсен карательнăй отрячĕ тискеррĕн асаплантарса пĕтернĕ. Гитлерла вăрă-хурахсем хресченсене ним юлмиччен çаратса тухнă та вĕсен пÿрчĕсемпе хуçалăх çурчĕсене ишĕлтерсе пĕтернĕ, унтан йăлтах çунтарса янă. Ялти 275 пÿртрен мĕнпурĕ те пĕр пÿрт çеç тăрса юлнă. Çунакан пÿртсенчен тухса ĕлкĕрейменнипе ватă çынсемпе пĕчĕк ачасем нумай пĕтнĕ. Укăлча хыçĕнче гитлеровецсем асаплантарса хуçлатса вĕлернĕ сакăр хĕрарăмпа пĕчĕк ачасен виллисене тупнă. Ялти 900 çынна ытла нимĕçсен карателĕсем Германие каторгăлла ĕçе хăваласа кайнă.

Октябрĕн 13-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Октябрĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн чаçсем противникăн атакисене сире-сире янă. Нимĕçсен пехоти хулан çурçĕр-хĕвеланăç енчи пĕр завод патнелле татса кĕме хăтланнă. Гитлеровецсен атакине сирсе янă. Нимĕçсен 250 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçăн боецĕсем çĕрле противник тăракан вырăна кĕрсе кайнă та 60 гитлеровеца вĕлернĕ, 2 оруди, 5 пулемет тата радиостанцине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 2 миномет, 6 пулемет тата 20 автомат тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн танкистсем нимĕçсен 3 танкне персе çĕмĕрнĕ, 5 противотанковăй орудине пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра пирĕн подраздленисем гитлеровецсен контратакине сирсе янă, нимĕçсен 80 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче çапăçусем пынă. Пĕр участокра пирĕн чаçсем пăртак малалла куçнă. Противник хăйĕн пехотипе танкĕсен вак групписемпе контратакăсем тăвать. Çав çапăçусенче Н-ски чаçăн боецĕсем 250 гитлеровеца вĕлернĕ тата нимĕçсен 4 танкне персе çĕмĕрнĕ. 21 нимĕç салтакĕ хăйсен ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар енне куçнă. Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче оборонăн малти хĕрри тĕлĕнче нимĕçсен 8 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник пехотăн пĕр полк таран вăйĕпе пирĕн Семерников юлташ ертсе пыракан подразделени хÿтĕлекен позицисене атакăланă. Пирĕн боецсем нимĕçсене пур йышши хĕçпăшалсемпе те персе кĕтсе илнĕ. Противникăн атакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 400 вилли таран выртса юлнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем, разведка тăвакан группăсем тата артиллери активлăн кĕрешнипе тата минометсемпе пенипе, икĕ кун хушшинче тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ. 8 станковăй пулемет, темиçе миномет пĕтерсе тăкнă, противникăн 25 дзочĕпе блиндажне çĕмĕрнĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен пĕр ушкăнĕ противникăн обозне кĕтмен çĕртен тапăннă. Партизансем 34 нимĕç салтакне вĕлернĕ тата çар грузĕсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Итальянецсен «Пасубио рома» ятлă пехотнăй дивизийĕнчи 79-мĕш полкăн 7-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтаксем Ипполито Ковелли тата Альдо Ковелли çапла каласа панă: «Эпир август уйăхĕнче фронта хушса панă çынсен шучĕпе килтĕмĕр. Дивизири салтаксем пире дивизи пысăк çухатусем тÿсни çинчен каласа пачĕç. Сăмахран, 7-мĕш ротăра мĕнпурĕ те 7—8 çын çеç юлнă пулнă. Август уйăхĕнче ăна икĕ хутчен çĕнĕ вăйсем хуша-хуша панă. Çав ротăра икĕ кун хушшинчи çапăçусенче кăна 60 çын ытла виднĕ е аманнă. Итали салтакĕсем нумайĕшĕ çакăн пирки тарăхаççĕ: чернорубашечниксем Италире пурăнаççĕ, пире кунта вилĕм çине хăваласа килеççĕ, теççĕ. Нумаях пулмасть Италире фронта каякан Альпийски чаçăн салтакĕсемпе чернорубашечниксем хушшинче юнлă тытăçу пулса иртнĕ. Поезд тапранса каяс умĕн Альпийски стрелоксем вокзалра пулнă чернорубашечниксен пĕр ушкăнне çавăрса илнĕ те хĕнесе тăкнă. Алă вĕççĕн пулса иртнĕ тытăçура 9 чернорубашечника вĕлернĕ».

* * *

Сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче Смоленск облаçĕнчи Петровка ялĕнчи çынсем нимĕç комендантĕнчен икĕ кун хушшинче комендатурăна 10 кĕрĕк пиншак, 5 тăлăп тата 40 мăшăр çăматă пама хушакан приказ илнĕ. Хресченсем нимĕç çарĕ валли ăшă тумтирсем пама килĕшмен. Икĕ кун иртсен вара çав яла карательнăй отряд пынă та çынсене тискеррĕн вĕлерме тытăннă. Обер-лейтенант Бюрен хушнипе фашистла ирсĕрсем 27 колхознике персе вĕлернĕ. Персе вĕлернисем хушшинче 64 çулхи Иван Ефимович Сазонов, 57 çулхи Федор Федорович Цветков, 41 çулхи Анна Михайловна Капустина, 19 çулхи Елена Николаевна Градова тата çав ялти ытти çынсем те пур.

* * *

Ослора (Норвегире) кашни кун тенĕ пекех Норвеги патриочĕсемпе нимĕç оккупанчĕсем хушшинче тытăçусем пулса иртеççĕ. Сентябрĕн 29-мĕшĕнче хула хĕрринче 6 нимĕç салтакне вĕлернĕ. Октябрĕн 2-мĕшĕнче кăнтăрла халăх йышлăн çÿрекен пĕр урамра паллă мар пĕр çамрăк çын нимĕç офицерне персе вĕлернĕ. Вĕлерекенни тарса пытаннă.

Польша посолĕ господин Т. Ромер ССР Союзне килни

Çак çулти октябрĕн 12-мĕшĕнче Куйбышев хулине Польша республикин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ господин Тадеуш Ромер çитнĕ.

Аэродром çинче Т. Ромер господина Ютçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн протокольнăй отделĕн заведующийĕ Молочков юлташ, Польша ĕçĕсен повереннăйĕ г. К. Соколуцкий ертсе пынипе Польша посольствин составĕ тата Англи посольствин советникĕ г. Баггалей кĕтсе илнĕ.

Сталинградра

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Ĕнер нимĕçсен чаçĕсем пирĕн подразделенин позицийĕсене атакăланă.

Фашистсен пехоти наступление танксемпе авиаци пулăшса пынипе кайнă. Совет боецĕсем тăшман хĕснине çирĕп тăрса сирсе янă, ăна пысăк çухатусем тÿстернĕ. Пирĕн артиллерипе пехотинецсем 200 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă тата 5 танка персе çĕмĕрнĕ. Противникăн икĕ машинине Шонин лейтенант персе çĕмĕрнĕ, ытти икĕ машинине Кровлев старшина гранатăсем ывăтса стройран кăларнă. 5-мĕш танка Сорочинский красноармеец противотанковăй пăшалпа персе пĕтерсе лартнă.

Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринчи тепер вырăнта фашистсем Иванов капитан ертсе пыракан артиллери дивизионĕн вутçулăмĕ айне пулнă. Старши сержант Вицеховскин оруди расчечĕ тăшманăн пехотăпа грузсем турттарса пыракан 8 автомашинине тата артиллери батарейине пĕтерсе тăкнă.

Ĕнер пирĕн Н-ски чаçа Богачев сержант ертсе пыракан взвод тавăрăннă. Вăл противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç 36 сехет хушши пĕр чарăнмасăр çапăçнă. Нимĕçсем çав взвода йăлтах çавăрса илнĕ пулнă. Боецсем танмар условире çапăçнă. Бутырин красноармеец хăйĕн автомачĕпе персе 20 нимĕçе вĕлернĕ, Горянинов 15 фашиста пĕтерсе тăкнă, пулемет расчечĕн командирĕ Яблоков 50 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Çав тытăçусенче пирĕн взвод, противникăн нумай салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкса, хăйĕн чаçне тавăрăннă.

Стрелковăй батальонăн сулахай флангĕнче сахалтарах пеме тытăннă. Нимĕçсем çакăнпа часах усă курма шухăшланă, вĕсем пирĕн оборонăна саваллланса кĕме вăйсем пухма тытăннă. Çапăçăва ертсе пынă командир нимĕçсен шухăшне пĕлнĕ те нимĕçсем валли вут-çулăм миххи туса хума шут тытнă. «Ансăр» вырăна вăл пĕр ушкăн красноармееца янă. Боецсене çакăн пек вырнаçтарса тăратнă: оборонăн центрĕ пирĕн еннелле куçнă, флангсенче вăйлă ударнăй группăсем тăнă. Нимĕçсем миномётсемпе вăйлăн персе тăнă хыççăн наступление кайнă. Пирĕн боецсем тăшмана хамăрăн оборонăна саваллланса кĕме май панă та ун çине пулеметсемпе вăйлăн пеме тытăннă. Çав михĕ ăшĕнче гитлеровецсене 100 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

Хула хĕррисенче çапăçусем пĕр сехете те лăпланмаççĕ. Пурăнмалли çуртсем опорнăй пунктсем пулса тăнă. Çуртсен чÿречисене бойницăсем туса хунă. Заводсен цехĕсенче рабочисем хăрушлăха пăхмасăр танксене юсаççĕ, çĕмĕрнĕ орудисене тÿрлетсе строя тăратаççĕ. Совет патриочĕсем чул куписем айĕнчен тупăсен, пулеметсен, автомобильсен пайĕсене иле-иле пуçтараççĕ те вĕсенчен хатĕр хĕçпăшалсем тăваççĕ. Сталинградри рабочисем — вĕсем ĕçлекен çынсем çеç мар, вĕсем хăйсен хулине нимĕç оккупанчĕсенчен хÿтĕлекен боецсем те пулса тăраççĕ. Нумаях пулмасть фашистсен самолечĕсем пĕр ушкăн çурт çине вут тивертекен бомбăсем пăрахнă. Пĕр пекарньăри пекарьсем хăйсен ĕçне пăрахса пушарсене сÿнтерме тытăннă. Унтан хăйсен кăмакисем патне тавăрăнса, вĕсем çапăçакан чаçсем валли 50 тонна ытла çăкăр пĕçерсе хатĕрленĕ. Хула-боец, хула-герой малалла çапăçать.

Н. МАРКОВСКИЙ.
Д. ЩУКИН.

Сталинград

Çынпа чул, кунпа çĕр, çăра тĕтĕм
Пăтранаççĕ пĕрле çулăмра.
Паттăр улăп пулса эсĕ кĕтĕн
Çак вăрçа, Сталинград.

Аслă Атăлăн чăнкă çыранĕ
Уссе тăчĕ тата чăнкăрах.
Тăчĕ иртнĕ кунсен ветеранĕ—
Паянхи Сталинград.

Килсе пăхнă кунта сĕмсĕр нимĕç,
Çавăнпа халь те чунĕ хăрать.
Хурçă хĕç пек тăрать ăна хирĕç
Парăнми Сталинград.

Вилĕмрен хăраса, кунĕн-çĕрĕн
Урнă фриц бомбăсем пăрахать.
Анчах улăп пек вилĕмсĕр, чĕрĕ
Çулăмри Сталинград.

Тулса çитнĕ хаярлăх хăвачĕ
Тинĕсрен аслăрах, тарăнрах.
Çак вăя тăван çĕрĕмĕр пачĕ,
Иксĕлми Сталинград.

Хурçă улăпăн çулăмлă чапĕ
Çĕр-çĕр урлă кайса янăрать.
Тăшмана хуçмаллах пырса çапĕ
Хуçăлми Сталинград.

Çынпа чул, кунпа çĕр, çăра тĕтĕм
Пăтранаççĕ пĕрле çулăмра.
Тăшмана çĕнтерме эсĕ кĕтĕн
Çак вăрçа, Сталинград!

Арк. ЭСХЕЛЬ.

Республикăри колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас тата авăн çапас ĕç октябрĕн 10-мĕш тĕлне мĕнле пулса пынине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Кĕрхи çĕртме тунă (процентпа)	Авăн çапнă, комбайнпа вырнине шута илсе (процентпа)
Канаш	53,2	71,2
Калинино	45,9	63,3
Шăмăршă	45,1	65,6
Шăхасан	41,9	72
Сĕнтĕрвăрри	40,1	58,3
Етĕрне	38,8	61,8
Сĕнтĕр	38,8	69,6
Çĕрпÿ	38,1	65,7
Элĕк	37,1	65,2
Хĕрлĕ Чутай	36,7	58,8
Шупашкар	36,5	69,1
Октябрьски	36,1	55
Тăвай	35,4	64,8
Вăрмар	35,2	60,3
Куславкка	34,4	54,8
Вăрнар	33,8	60,3
Комсомольски	32,1	63,1
Улатăр	30,6	56,3
Елчĕк	30,5	48,6
Çĕмĕрле	30	66
Советски	26,3	48
Ишлей	24,3	73,6
Первомайски	23,4	66
Йĕпреç	22,5	67,2
Красноармейски	22,2	69,7
Чкаловски	21,5	56,8
Пăрачкав	18,2	77,8
Кувакино	12,4	78,1
Шупашкар хули	74,8	69,6
ЧАССР тăрăх	32,7	63,7
Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пулнă	27,3	61

ТЫРĂ ПАРАС ĔÇЕ ВĂЙЛАТМАЛЛА

СĔНТĔРВĂРРИ, октябрĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). ВКП(б) Чăваш Обкомĕ государствăна тырă парас тĕлĕшпе колхозсенче хĕрлĕ обозсем организацилесси çинчен йышăннă решение районри колхозсем хастарлăн пурнăçлама тытăнчĕç. Нумай колхозсем хĕрлĕ обозпа государствăна тĕштырă, çĕрулми, пахча-çимĕçсем леçсе параççĕ. «Сĕнтĕрпуç», «Красный волгарь», «Волна» колхозсем хĕрлĕ обозсемпе государствăна чылай тырпул пачĕç.

Ăстакасси ялсоветне кĕрекен «Пищевик» колхоз икĕ кун хушшинче государствăна 19,8 тонна, «Коминтерн» колхоз 22,8 тонна çĕрулми леçсе панă.

Виçĕ кун хушшинче районри колхозсем хатĕрлев пунктне 110 тонна, колхозниксем 15 тонна, единоличниксем 2 тонна çĕрулми леçнĕ. Çапах та районри колхозсем тĕштырăсем парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Иртнĕ виçĕ кунра колхозсем государствăна мĕнпурĕ те 13,2 тонна ытларах çеç тырă панă. Çакă вăл колхозсем хăйсен ĕçне тĕрĕс организацилеменнинчен килет. Çакна шута илсе, районри партактивран 18 çынна колхозсене пулăшма янă.

К. РОСТОВЦЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Виçĕ норма тултараççĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. «Восход» колхозри виççĕмĕш бригада кĕлтесене капана кĕртсе çитерчĕ. Халĕ бригадăри колхозниксем авăн çапас тĕлĕшпе хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ. Колхозницăсем Е. Ильина, Е. Айкина кулленех хăйсен нормисене икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултарса, куллен 3—4 ĕçкунĕ ĕçлесе илеççĕ.

И. М.

Çамрăк патриотсене— комсомол ретне

Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяррăн çапăçнă вăхăтра Калинино районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем хăйсен пĕтĕм ĕçне фронт интересĕсене пăхăнтарса туса пыраççĕ. Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара ялхуçалăх продукчĕсем ытларах хатĕрлесе парас ĕçре çĕршер комсомолецсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Чылай колхозсенче комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен йышĕ юлашки вăхăтра нумай хутшăнчĕ, ĕçĕ çирĕпленчĕ. Колхоз производствинче чи лайăх ĕçлекен çĕршер çамрăксем, малалла татах та лайăхрах ĕçлеме пулса, Ленинла—Сталинла комсомол ретне кĕме заявлени параççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа ВЛКСМ Калинино райкомĕ 164 çамрăка комсомол ретне илчĕ. Нумай колхозсенчи пуçламĕш организацисем ĕçре малта пыракан çамрăксене комсомол ретне илессине пĕр вăхăтлăха та чарса тăман. Кăçал, тырпулсене уйхирсенчен пухса кĕртнĕ вăхăтра çеç, комсомолăн районри организацине 43 çамрăк хутшăннă. Вĕсем пурте колхоз производствинчи стахановецсем, тырпулсене пĕр тăккаламасăр, вăхăтра пухса кĕртессишĕн вăя шеллемесĕр ĕçленĕ çамрăксем.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре комсомол организацийĕсем кăçал тивĕçлипе пысăк вырăн йышăнчĕç. Районри 6 комсомолец — колхоз председателĕсем, 15 комсомолец — уй-хир ĕç бригадисен бригадирĕсем, 41 комсомолец — выльăх-чĕрлĕх фермисенче, 11 комсомолец— колхоз счетоводĕсем пулса ĕçлеççĕ.

Партин пуçламĕш организацийĕсем çук колхозсенче комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем, ĕçри пĕтĕм ответлăха хăйсем çине илсе, колхозсене кăтартуллăн ертсе пыраççĕ. Комсомолец З. Степанов председатель пулса ĕçлекен Элменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пĕри. Колхоз, 329 гектар çинчи тĕштырăсене ăнăçлăн пухса кĕртсе, вĕсене сентябрь уйăхĕнчех çапса пуçтарчĕ. Государствăна обязательство тăрăх та, натуроплата шучĕпе те тата Хĕрлĕ Çар фондне хумалли тырра та пĕтĕмĕшпех парса татнă. 1942 çулта государствăна 7.348 литр сĕт, 126,72 центнер аш-какай парса, çулталăкри плана тултарнă, 1943 çулшăн та 440 литр сĕт, 53,43 килограмм аш-какай панă. Колхоз, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пур йышши техникăллă культурăсемпе пахча-çимĕçсене государствăна срокчен парса татассишĕн кĕрешет. Çак иртнĕ уйăхра колхоз государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти планне пур йышши выльăхсем енĕпе те ирттерсе пурнăçларĕ.

Государствăна тырă хăвăртрах парса татас тĕлĕшпе районри комсомолецсемпе çамрăксем виçĕ воскресник туса ирттернĕ. Вăл воскресниксенче государствăн хатĕрлев пункчĕсене 3.108 центнер тырă, çĕрулми леçсе панă. Государствăна тырă леçсе парас ĕçре Мачамăшри «Первомайское» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем пуçаруллăн ĕçлеççĕ. Хăйсен вăйĕпе вĕсем государствăна 123 центнер тырă, 87 центнер çĕрулми турттарса кайнă.

Ялхуçалăх ĕçĕнче пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçлекен çамрăк патриотсен йышĕ хутшăнса пырать. Вĕсем комсомолецсемпе пĕрле алла-аллăн тăрса ĕçлеççĕ. Çамрăк патриотсем хушшинче политикăллă-ăнлантаруллă ĕçе туса пырасси—комсомол организацийĕсен тĕп задачи пулса тăрать. Тăван çĕршывпа фронт интересĕшĕн чĕререн парăнса ĕçлекен, хăйсен пĕтĕм вăйне ĕçе хурса Хĕрлĕ Çара пулăшса пыракан çамрăксене Ленинла—Сталинла комсомолăн ретне малалла та илсех тăмалла.

В. ЗАЙЦЕВ.

Ют çĕршывсенче

Уэллес тухса калани

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Бостонра тулашри суту-илÿ Совечĕн съездĕнче (ку вăл — Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен экспортпа импорт суту-илĕвне хутшăнакан фирмăсен организацийĕ) Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государственнăй секретарĕн заместителĕ Уэллес сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Хальхи историн темиçе ĕмĕрĕ тăрăшĕнче никам та, нихăçан та Совет Союзĕн çарĕсенчен хастарлăрах çапăçман-ха. Вĕсем пĕлтĕр Гитлерăн хĕçпăшаллă вăйĕсене ăнăçлăн, пĕр хăрамасăр хирĕç тăни Гитлерăн каппайчăк сăмахĕсене — Хĕрлĕ Çара аркатса тăкнă ĕнтĕ тесе мухтанса каланă сăмахĕсене сирсе пăрахрĕ, çакă вăл пĕрлешнĕ çĕршывсен ку вăрçăри савăнăçлă чи пысăк çĕнтерĕвĕ пулса тăчĕ. Унта совет геройĕсем 1942 çулта та вăрăм вăхăт хушши çĕнĕрен çирĕп хирĕç тăчĕç. Кăçал Гитлер Германи халăхне — Совет Союзĕ эпир наступлени тунипе часах саланса кайĕ тесе каламасть ĕнтĕ. Вăл апла калама хăяймасть. Германи халăхне Гитлерăн авантюрисем ăна мĕн тери хакла ларни паллă пулса тăнине, унăн сăмахĕ халĕ те, ĕлĕкхисем пекех, час шупкалакан демагогăн суя сăмахĕ пулни паллă пулса тăнине вăл пĕлет.

Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата вĕсен союзникĕсен Совет Союзне чи пысăк пулăшу парса тăмалла. Вĕсем хĕçпăшалсем, оборудовани, материалсем парса пулăшĕç-и, е Гитлера хирĕç тепĕр çĕрте вăрçă ĕçĕсем пуçланипе Германи çарĕсене çавăнталла илсе кайтарса пулăшĕç-и, — вĕсем Совет Союзне пурмайсемпе те пите вăйлăн пулăшса тăрĕç. Гитлера парăнтармалли чи шанчăклă мел вăл Совет Союзне çавăн пек пулăшса тăни пулать, ăна вăйлăн пулăшни тата пите хăвăрт пулăшни пулать».

«Эпир çак вăрçăра çĕнтеретпĕр тесе шутлатăп эпĕ,—терĕ Уэллес, — эпĕ пĕлетĕп: вăрçă мĕн тери вăраха тăсăлсан та, йывăрлăхсем мĕн тери пысăк пулсассăн та, Америка халăхĕ пĕрлешнĕ çĕршывсем пĕтĕмĕшпех те татăклăн çĕнтеричченех хĕçпăшала алăран ямĕ».

Уэллес çапла каланă: хальхи вăхăтра тăвакан вăрçă ĕçĕсем çителĕксĕр-ха, тенĕ. «Пиртен нумайĕшĕ, — тенĕ малалла Уэллес, — усалăн мĕнле вăйсем пире хирĕç тăнине, пирĕн тăшманăн вăрçă ресурсĕсем мĕн тери нумай пуррине, пирĕн умра мĕн тери пысăк задачăсем пуррине çителĕклĕ тăран ăнланса илеймен-ха. Пиртен нумайĕшĕ ăнăçу тумашкăн кашни гражданинăн мĕн тери пысăк жертвăсем тÿсмеллине пĕтĕмпех ăнланса илмен-ха, тĕнĕл держависем хушшинчи преступниксем тĕнчене хальхи катастрофăна кĕртсе янă пирки кашни уйрăм çыннăн пурнăçĕ улшăннине ăнланса илмен-ха».

Оккупациленĕ Бельги Германие хирĕç тăрать

ЛОНДОН, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Бельгири «Фольк эн Стаат» ятлă фашистла хаçат çапла пĕлтерет: сентябрĕн 20-мĕшĕнче Антверпен хулинче фашистла дружиниксен парадĕнче бомба çурăлса кайнă.

Гент хулинче тухса тăракан «Вооруйт» хаçат çапла пĕлтерет: сентябрĕн 27-мĕшĕнче Гент портĕнчи платниксен шкулĕнчи фламандсен хуралĕн çуртĕнче бомба çурăлса кайнă. Çар коменданчĕ панă приказ тăрăх, Гент хулине 5,5 миллион франк штраф тÿлеттермелле тунă. 50 çынна заложник шучĕпе тытса хупнă.

НИМĔÇСЕН НОРВЕГИРЕ ÇĔНĔРЕН ТУНĂ ТИСКЕР ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Норвегин телеграф агентстви çакăн пек хыпарсем илнĕ: Норвегири пĕр пĕчĕк, Гран ятлă приходра, унта нимĕнле саботаж та пулман пулин те, пĕтĕм çамрăка тенĕ пекех асаплантарса вĕлерсе пĕтернĕ. Асаплантарса вĕлернисем хушшинче фермерсемпе рабочисем пуринчен ытла. Тата кунсăр пуçне приходри 75 çынна тытса хупнă.

НИМĔÇСЕН ФАШИСТЛА АГЕНТУРИН СИРИРИ ТАТА ЛИВАНРИ ИРСĔР ĔÇĔСЕМ

АНКАРА, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Дамаскран килекен хыпарсем тăрăх, нимĕçсен фашистла агентури Сирипе Ливан территорийĕ çинче бандитла шайкăсем организацилет. Нимĕçсем араб-эмигрантсем урлă çав шайкăсене инструкцисем, укça-тенкĕ, çавăн пекех тата хĕçпăшал та парса тăраççĕ. Çав ĕмĕтпе араб-эмигрантсем, контрабандистсем пек пулса, Сирие сăрхăнса кĕреççĕ те нимĕçсемпе çыхăнаççĕ. Нумаях пулмасть Хомс районĕнче темĕнле Мохамед Акыл Радд ятлăскер, ют çĕршывран инструкцисемпе укça-тенкĕ илсе, бандитсен отрядне организаленĕ. Çав отряд Хемрель тăвĕсем хушшине вырнаçнă. Çав шайка çывăхра халăх пурăнакан пунктсем сине тăтăшах тапăнать.

АНГЛИЕ АМЕРИКА ВОЙСКИСЕН ÇĔНĔ КОНТИНГЕНЧĔ ÇИТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви çапла пĕлтерет: Англи порчĕсенчен пĕрине Америка войскисен темиçе пин çынран тăракан çĕнĕ контингенчĕ пырса çитнĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла Англин бомбардировочнăй авиацийĕ Хĕвеланăç Германин чылай пункчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Çав пунктсен шутне Ганновер хули те кĕрет. Çавăн пекех тата Англи истребителĕсем Франци оккупациленĕ зонинчи Абвильри аэродрома тапăннă.

Октябрĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле противникăн самолечĕсем Англи çине вĕçсе пынă. Унччен 2 эрне хушши противникăн самолечĕсем Англи çинче пулман. Çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи çыransем хĕрринче ларакан хуласенчен пĕринче пĕр шкула тата темиçе пÿрте сиен кÿнĕ. Вилнисемпе аманнисем пур.

КĔСКЕН

● Соломон утравĕсен районĕнче Америка самолечĕсем японецсен эсминецне путарнă тата тепĕр крайсерпа эсминецне сиенленĕ.

● Чилири çамрăксен съезчĕ тĕнĕл держависемпе çыхăну тытма пăрахмашкăн хушакан резолюцие ырланă.

● Ницце хулинче Франци патриочĕсем фашистла «штурмовиксен легионĕн» штабĕ вырнаçса тăнă çурта бомба пăрахнă.

● Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: «Эльзас-Лотарингири çамрăксене ирĕксĕрлесе Германи çарне илме пуçланă пирки унти çамрăксем Эльзас-Лотарингирен массăллăн туха-туха тараççĕ.

● Гитлеровецсем Парижра татах 5 пин француза арестленĕ. Вĕсене пурне те кăтартса панă вăхăт иртсен урама тухма чаракан распоряжение пăхăнманшăн тытса хупнă. Ку распоряжение вĕсем Парижри пĕр кинотеатрта пулнă взрыв хыççăн кăларнă. Çав взрыв вăхăтĕнче нимĕçсен пĕр салтакĕ вилнĕ тата 30 салтакĕ аманнă. (ТАСС).

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Çулталăкри плана 133 процент тултарчĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Каранъялĕнчи «Труд» промартель ĕçсыннисем валли куллен таварсемпе фронта кирлĕ продукцие уйăхран уйăха нумайрах туса кăларать. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, артель коллективĕ сентябрьти задание 257 процент, çулталăкри плана 133 процент тултарчĕ. Сентябрьте августринчен 18 процент чухлĕ ытларах продукци туса кăларчĕ.

Хĕрÿ ăмăртура рабочисем хăйсен ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Опытлă рабочисем Д. Соколов, А. Яковлев, Д. Григорьев юлташсем кулленхи нормăна 405 процент таран тултараççĕ. Çамрăк работницăсем М. Назарова, С. Ласточкина юлташсем нормăран 2 хут тухăçлăрах ĕçлеççĕ. Л. Баймекова, А. Порфирьева çĕвĕçсен ĕç тухăçлăхĕ те вĕсенчен кая мар.

Паллă стахановка Варвара Чубакова юлташа «Отличнику промкооперации» значокпа наградăланă. Кĕпе-йĕм çĕленĕ çĕрте ĕçлесе, вăл сентябрьти нормăна 207 процент тултарчĕ. Хальхи вăхăтра вăл закройщиксен бригадине ертсе пырать, çак ĕçре пултарулăх кăтартать. Çав вăхăтрах Чубакова юлташ комсомолăн артельри пуçламĕш организацийĕн секретарĕ пулса ĕçлет.

Артель коллективĕ хĕле кĕме хăйĕн вăйĕпех хатĕрленчĕ: цехсене юсарĕ, 250 кубометр вутă хатĕрлерĕ. Вутă хатĕрленĕ çĕрте Н. Шувалов юлташăн бригади хастарлăн ĕçлерĕ, бригада кулленхи нормăна 150 процент тултарса пычĕ.

И. МОКЕЕВ,
Артель правленийĕн председателĕ.

Çĕнĕ çитĕнÿсемпе паллă тăваççĕ

КАЛИНИНО. Октябрьти революци 25 çул тултарнине Нурăс лесничествинче ĕçлекенсем çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, вĕсем хăйсен çулталăкри ĕç планне октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ. Хальхи вăхăта çак обязательствăна чылай енĕпе пурнăçланă. Йĕлтĕр туйисене, сăмахран, çулталăкри планпа пăхнă чухлех (1.100 мăшăр) тунă. Урапа тукунĕсем, çуна тупанĕсем тăвас план та вĕçленсе пырать. Çак ĕçре опытлă рабочисем Павлов, П. Михайлов, Скворцов юлташсем пултаруллăн ĕçлеççĕ. Вĕсем уйăхри ĕç нормисене 280-шар процент тултараççĕ.

Т. Еремеев, Ф. Сергеев бригадисем кăпчанкă хуппи хатĕрленĕ çĕрте тимлĕн ĕçлеççĕ. Вĕсен пурĕ 1.700 килограмм хатĕрлемелле пулсан, 1.500 килограмм хатĕрленĕ те ĕнтĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Чугунçул валли—вутă

ЙĔПРЕÇ. Район чугунçул валли вутă хатĕрлесе парас ĕçре пысăк çитĕнÿсем турĕ: виççĕмĕш кварталти плана касса хатĕрлес енĕпе 160 процент, турттарса кăларас енĕпе 215 процент тултарчĕ. Иртнĕ кварталта районри 45 колхозран 22 колхоз плана ирттерсе тултарчĕç.

Чугунçул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе «Тымар» колхозри мастер участокĕ (начальникĕ коммунист П. Козлов юлташ) малта пырать. Çак участокра социализмлă ăмăртăва анлăн сарнă. Ăмăрту паха результатсем пачĕ, стахановецсен шутне вуншарăн ÿстерме пулăшрĕ. Паллă стахановец В. Чураков юлташ, лучковăй пăчкăпа ĕçлесе, кунне 15 кубометр вутă касса хатĕрлет. Ĕç тухăçлăхне вăл 700 процента çитиÿстернĕ. Çитес кунсенче вăл тысячниксен шутне тăрасса шанма пулать.

Шăртанти «Заря» колхозран пынă бригада та лайăх ĕçлет. Бригадăна çамрăк хĕрача Анна Петаева ертсе пырать. Вăл хăйĕн бригадинче ĕçе тĕрĕс организациленипе тата социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пынипе виççĕмĕш кварталта вутă касса хатĕрлес плана 194 процент тултарнă. Халĕ ку участокра стахановецсен йышĕ 35 çынна çитнĕ, пĕр уйăх каялла вĕсем 5—6 çынран ытла пулман.

Вăрманта ĕçлекенсем малашне татах та пысăкрах çитĕнÿсем тăвас тесе хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илнĕ. Вĕсем чугунçул валли вутă хатĕрлемелли пилĕк уйăхри задание Октябрь уявĕ тĕлне тултарма пулнă. Çак обязательствăна пурнăçлас тесе, кашни рабочи, кашни колхозник вăрманта ывăнма пĕлмесĕр, фронтри пек ĕçлеççĕ.

Дм. МИХАЙЛОВ.

Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ çĕрте

(Фронтран килнĕ çырусем)

Нимĕç оккупанчĕсем Сталинград патĕнче, Кавказ тăвĕсем патĕнче малалла кайма талпăнаççĕ. Вĕсем кунта хăйсен шăлĕсене хуçма тивĕçлĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çар тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçать, ăна пысăк çухатусем кÿрет. Çак хĕрÿллĕ çапăçусенче пирĕн земляксем те хăйсен пурнăçне шеллемесĕр, хастарлăн кĕрешеççĕ.

Акă мĕн çырать пирĕн редакцине Хĕрлĕ Çара Тăвай районĕнчен кайнă кĕçĕн лейтенант **В. М. Ашмарин** юлташ:

«Эпĕ икĕ хутчен амантăм. Халĕ каллех фронта килтĕм. Манăн боецсем тăшмана хирĕç мĕнпур вăя хурса кĕрешеççĕ. Нимĕçсен ирсĕрлĕхĕсене эпир кунта хамăр куçпа куратпăр. Çавăнпа та вĕсене хирĕç пурнăçа шеллемесĕр кĕрешетпĕр. Хамăрăн республикăри колхозниксене те фронта пулăшас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлесе çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнÿсем тума чĕнетпĕр».

Хĕрÿллĕ çапăçусенче пиçĕхсе, ÿссе пыраççĕ пирĕн земляксем. Красноармеецсем — кĕçĕн командир, кĕçĕн командирсем — вăтам командир пулса тăраççĕ. Правительство наградине илеççĕ.

Акă мĕн çырать Балти флочĕн морякĕ пирĕн земляк **А. П. Петров** юлташ:

«Чăваш красноармеецĕсем подразделенире малти ретре пыраççĕ. Отделени командирĕ Шибалов малтанхи вăхăтра рядовой пулеметчик пулнă. Çапăçусенче хăйĕн пултарулăхĕпе паттăрлăхне кăтартнине кура, ăна кĕçĕн сержант званине пачĕç. Юлашки вăхăтра вăл вычислительсен отделенин командирĕ пулса уйрăмăнах пултаруллă кĕрешрĕ, фашистсен батарейисене, дзочĕсене, салтакĕсене пĕтерсе тăкма пулăшрĕ. Çакăншăн ăна «За боевые заслуги» медаль парса наградăларĕç. Юркин, Зайцев тата ытти юлташсем те хăйсен пĕлĕвĕсене хăпартса ÿссе пыраççĕ».

Пирĕн земляксем паттăррăн çапăçаççĕ кăна мар, вĕсем тата пĕлсе кĕрешеççĕ, вăрçăри чеелĕхе кăтартаççĕ.

Редакцине хамăрăн земляк лейтенант **Т. Г. Гурьев** юлташ çапла çырса пĕлтерчĕ:

«Пĕррехинче эпир окруженине лекрĕмĕр. Йышлă противника хирĕç эпир темиçе сехет хушши çапăçрăмăр. Кашни минутăрах пире тăшман ытларах та ытларах хĕссе пычĕ. Манăн боецсен штыкпа приклад çеç тăрса юлчĕ, мĕншĕн тесен патронсене персе пĕтертĕмĕр. Пирĕн 3 граната пурччĕ, анчах вĕсем валли запалсем çукчĕ. Мĕн тумалла? Тăшмана çĕр çумне лапчăтни, персе тăма чарни кирлĕ пулнă пире. Кунта вара ман пуçа пĕр шухăш килсе кĕчĕ.

Взвод хатĕрленсе тăчĕ. Виçĕ боец çурăлман гранатăсене ывăтса ячĕç. Анчах вĕсем хăрушă маррине тăшман пĕлмен. Сывлăшра вĕçекен гранатăсене курса, белофинсем лапчăнса выртрĕç. Пире çакă кирлĕччĕ те. Эпир вара сиксе тăрса тăшман патне чупса пытăмăр та вĕсене штыкпа çĕмĕрме тытăнтăмăр. Эпир 35 белофина пĕтерсе тăкса, вĕсен виллисем урлă танатаран тухрăмăр.

Тепĕр тĕслĕх. Взвод наступлени тума приказ илчĕ. Противник патне çывхарса çитсен эпĕ взвода виçĕ ушкăна уйăртăм. Вĕсенчен пĕри, тÿрех наступлени тăваканни, тăшмана хăй çине илĕртсе тăмаллаччĕ, икĕ ушкăнĕ флангсенчен çавăрса илмеллеччĕ.

Анчах ĕç урăхла пулса тухрĕ. Тăшман, чи малтан, тÿрех наступлени тăвакан ушкăна мар, флангсенчи ушкăнсене асăрхарĕ. Вĕсем çине пеме тытăнчĕ. Çакна курса, эпĕ виççĕмĕш ушкăнпа ăнсăртран пырса çапма йышăнтăм. Анчах çак ушкăнра 4 çын кăна: эпĕ тата 3 боец. Тăватă çын мĕн тума пултараççĕ? Чеелĕхпе усă курма шут тытрăм. Финсем вырăс штыкĕнчен питĕ хăранине эпĕ шута илтĕм. Тăшман патне 20 метра çывхарса çитсе, эпĕ хыттăн:

— Батальон, штык вĕççĕн çапăçма!— тесе кăшкăртăм. Противник окопĕсене гранатăсем ывăтăнчĕç. Ăнсăртран тапăнни тата «батальон» тесе кăшкăрни финсене хăратса ÿкерчĕ. Çав вăхăтрах пирĕн флангри ушкăнсем те атакăна çĕкленчĕç. Тăшман васкасах тарчĕ.

Çапла паттăррăн та чеен кĕрешеççĕ чăваш халăхĕн ывăлĕсем отечественнăй аслă вăрçăра. Кунта Чăваш республикинчи Красноармейски районран килнĕ М. Константиновпа З. Вастихов уйрăмăнах палăрчĕç».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чебоксарский филиал ЭНЕРГОТРАНСУЧТЕКСТИЛЬ НАРОДНОГО КОМИССАРИАТА ТЕКСТИЛЬНОЙ ПРОМЫШЛЕННОСТИ СССР с 10 по 25 октября 1942 года ОБЪЯВЛЯЕТ ПРИЕМ НА КУРСЫ ПОДГОТОВКИ ШОФЕРОВ III КЛАССА.

Обучение на курсах бесплатное как для отдельных граждан, так и для предприятий, командировавших на курсы своих работников.

Срок обучения на курсах с отрывом от производства 1,5 месяца, без отрыва от производства 3 месяца.

На курсы подготовки шоферов принимаются мужчины и женщины не моложе 17,5 лет, имеющие образование не ниже 4-х классов.

Срок подачи заявлений с 10 по 20 октября. Начало занятий 25 октября с/г.

За всеми справками обращаться в канцелярию филиала: г. Чебоксары, ул. Володарского, д. № 5, II-й подъезд, с 9 до 20 часов ежедневно, кроме общевыходных дней.

2—2. ДИРЕКЦИЯ.

ВОДОСВЕТУ ТРЕБУЮТСЯ: слесаря 6 и 7 разрядов, машинисты, пом. машиниста к двигателям дизеля, электромонтеры, техники-электрики, шофера, вахтеры пожарной охраны, каменщики, чернорабочие, бухгалтера и ученики (женщины) для подготовки слесарей, электриков, машинистов, пом. машинистов и смазчиков.

Одиночки обеспечиваются общежитием, имеется столовая.

Обращаться: Водосвет, отдел кадров, тел. 1—28.

ДИРЕКЦИЯ ВОДОСВЕТА.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 954 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.